**Кĕрлерĕ тăвăл кунĕпех…**

Кĕрлерĕ тăвăл кунĕпех.
Кисренчĕ кун.
Сăн-пичĕ Атăл хумĕ пек
Шупкалчĕ ун.

Хĕвел пытанчĕ кăнтăрла.
Мĕнле чаран?
Çухатрĕ тĕк миçе тăрна?
Миçе чарлан?

Витсе хурать çăка тĕмне
Сĕм каçăн хупăлчи.
Хăй чĕппине чĕне-чĕне
Шăпланчĕ шăкăлчи.

Тĕтрелĕхре, сенкер варта,
Çухалчĕ кун.
Çыран хĕрне канма выртать
/шеннĕ хум.

*Воробьев, А. «Кĕрлерĕ тăвăл кунĕпех…» : [сăвă] / А. Воробьев // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 179.*